26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
7
ЮНКУН
75(6312) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Смоленск облаçĕнчи Вязьма, Гжатск тата Сычевка хулисенче тата Калинин облаçĕнчи Ржев хулинче тунă тискер ĕçсем çинчен

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем Совет Союзĕнчи граждансене, колхозсене, общество организацийĕсене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси

пĕлтерни

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсен фашистла çарĕ, Совет хулисемпе ялĕсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырать, мирлĕ граждансене, çавăн пекех тата тыткăна лекнĕ совет çыннисене пусмăрлать, асаплантарать, вĕлерет.

Çынсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пек массăллăн пĕтерсе пыни историре халиччен пулман. Шеллес туйăм вĕсен çук. Хӳтлĕхсĕр стариксенчен вĕсем калама çук хаяррăн мăшкăлласçĕ. Вĕсене ача амăшĕсен куççулĕсем те, ачасен пулăшма ыйтса тăснă аллисем те чарса тăмаççĕ. Гитлер вĕрентсе çитĕнтернĕ нимĕç çарĕ нимĕçсене кирлĕ мар çынсене пурне те асаплантарать тата вĕлерет, хăйсемшĕн кам ĕçлеме пултарать — çавсене вĕсем, выльăха илсе кайнă пек, Германие тарçăсен рынокне илсе каяççĕ.

Нимĕç оккупанчĕсем Вязьма, Гжатск, Сычевка тата Ржев районĕсенче тунă тискер ĕçсене, совет гражданĕсене асаплантарнине, вĕлернине, нимĕç чуралăхне хăваласа кайнине, хуласемпе ялсене çĕмĕрнине Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси председателĕ Н. М. Шверник тата Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси членĕ — Киевпа Галици митрополичĕ Николай çав районсенче хăйсем тĕпчесе пĕлнĕ.

Нимĕç фашисчĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем усал ĕçсем тунине çав районсенче оккупаци вăхăтĕнче пурăннă совет гражданĕсем те ĕнентерсе параççĕ, ун çинчен совет, хуçалăх, коопераци, профсоюз тата ытти общество организацийĕсен представителĕсенчен тата рабочисенчен, служащисенчен, колхозниксенчен, хуларипе ялти интеллигенцирен тата çар çыннисенчен тунă комиссисем çырнă актсем те каласа параççĕ.

Совет гражданĕсене вĕлерни тата асаплантарни

Совет государствине пĕтерсе тăкас, совет çыннисене çуртйĕрсĕр тата наци культурисĕр хăварас, вĕсене нимĕç чурисем туса хурас тĕллеве хăй умне лартса, Германин çар командованийĕ хăйĕн çар чаçĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисене çеç мар, Совет Союзĕнчи ялсемпе хуласенчи мирлĕ халăха та пĕр шеллемесĕр вĕлерсе пыма приказ панă.

Вязьмăпа Гжатск тата Ржевпа Сычевка районĕсенче Германин 4-мĕш армин командующийĕ генерал-полковник Хейнриц тата Германин 9-мĕш армин командующийĕ генерал-полковник Модель, этем моралĕн нимĕнле законĕсене те пăхăнмасăрах, мирлĕ пурăнакан пĕр айăпсăр совет гражданĕсене мăшкăлланă, асаплантарнă, вĕлернĕ. Вĕсем хушнипе Германин çар чаçĕсенчи офицерĕсемпе салтакĕсем совет гражданĕсене асаплантарнă, куçĕсене чике-чике шăтарнă, урисене, аллисене, хăлхисене каса-каса татнă, хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене вĕлернĕ.

Шиман генералăн жандармери корпусĕн чаçĕсем, бургомистр Арнольд Штаммп тата гестапо начальникĕ барон Адлер Вязьма хулинче темиçе пин мирлĕ граждана асаплантарса вĕлернĕ.

1942 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче вĕсем 34 арçынпа хĕрарăма машинăсем çине лартнă та хула тулашне илсе тухнă, унта вĕсене хăйсем валли виле шăтăкĕсем чавтарнă, унтан вара персе вĕлернĕ.

1942 çулхи февралĕн 25-мĕшĕнче фашистсем Вязьмăри хула больницин хирургне 65 çулхи М. Д. Бирштейна, 62 çулхи врача-окулиста А. Я. Лопырева тата унăн 16 çулхи ывăлне персе вĕлернĕ.

74 çулхи В. И. Мурашевские пĕр тĕллевсĕрех мăшкăлласа асаплантарнă. Вăл урамри пусăран килне шыв йăтса пынă. Унпа юнашар çуртра пурăннă нимĕç салтакĕ ăна хăй патне чĕнсе кĕртнĕ те унта ăна тискеррĕн вĕлернĕ. Мурашевскин виллине тĕплĕн пăхсан çакă курăннă: унăн сылтăм питçăмартине касса çурса сылтăм хăлхи еннелле тавăрса хунă, сылтăм хăлхине касса татнă, сулахай куçне чиксе шăтарнă, куç хупаххине вичкĕтеслĕх пек касса кăларнă, çӳлти тутине касса татнă, тăнлавĕ çинче вичкĕтеслĕх касса кăларнă, ĕнси çинчи тире бритвăпа касса илнĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хĕрарăм врачсене госпитальсенче санитаркăсем вырăнĕнче ĕçлеттернĕ. Ефрейтор Рихтер, госпиталĕн инфекци отделенийĕнче комендант пулса ĕçленĕскер, санитаркăсемпе медсестрасене пĕчĕк айăпшăнах тăнран яриччен хĕненĕ. Уборнăйсен алăкĕсем çине: «Вырăссене кĕме юрамасть, кĕнĕшĕн персе вĕлересçĕ» тесе çырса çапнă пулнă. Вырăс врачĕсемпе медсестрасем çав уборнăйсемпе усă курма пултарайман.

Сычевкăра хула коменданчĕ обер-лейтенант Кислер хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене пĕр шеллемесĕр асаплантарса вĕлернĕ.

1943 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче вăл 100 еврее — хĕрарăмсемпе ачасене тата стариксене — пĕр çĕре хăваласа пухнă та вĕсене унта хĕнесе пĕтернĕ, унтан вара хула тулашне илсе тухса пурне те персе вĕлернĕ.

1943 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Сниевкăри тифпа чирленĕ çынсене, медицина тĕлĕшпе пулăшу пама тесе, Набережнăй урамри 57-мĕш номерлĕ çурта хăваласа пухнă та питĕрсе лартнă, унтан вара вăл çурта вут тĕртнĕ. Медсестра Попова тата ытти медработниксем тăрăшнипе çав чирлĕ çынсен пĕр пайне çăлса хăварнă вара.

Сычевка районĕнчи Холмец ялĕ патĕнче çулăн участокне минăсенчен тасатмалла пулнă. Германин 102-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ генерал-майор Физлер хушнипе фашистсем Холмец ялĕнчи çынсене пухнă та вĕсене мина хурса тухнă çул тăрăх хăваласа кайнă. Çав çынсем вара пурте сирпĕнсе кайса вилсе пĕтнĕ.

Корбутовка ялĕнчи çынсем партизансемпе çыхăну тытаççĕ пулĕ тесе шухăшласа, фашистла влаçсем çав яла нимĕн юлмиччен çунтарса янă. Колхозница Баранова çапла тустарнине хирĕç сăмах каланăшăн нимĕçсем унăн хырăмне касса çурнă, питне çĕçĕпе каса-каса пĕтернĕ, унăн ачисен аллисене хыçалалла хуçлатса хунă тата пуçĕсене çапса шăтарнă.

Зайчики ялĕнче гестаповецсем 61 çулхи Михаил Заикова, 69 çулхи Никифор Белякова, 70 çулхи Екатерина Бегоровăна, 70 çулхи Екатерина Голубевăна, 5 çулхи Егор Даданова, 7 çулхи Мира Зерновăна тата ыттисене те мĕнпурĕ 23 çынна, пĕр çурта хăваласа пухнă та çав çурта вут тĕртсе унти çынсене пурне те чĕрĕллех çунтарса янă.

Климы ялĕнче нимĕçсем Богданова колхозницăн çамрăк ачине вут çине пăрахнă, унтан вара ăна хăйне те çунтарса янă.

Васильевка ялĕнче нимĕç палачĕсем колхоз председательне Тарбина тата кладовщика Ермолинские янахĕнчен тимĕр çеклĕпе çакса ярса вĕлернĕ.

Нимĕç войскисем 1943 çулхи мартра Гжатск районĕнчи Драчево ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсен полевой жандармери начальникĕн помощникĕ Бос лейтенант Драчево, Злобино, Астахово, Мишино ялĕсенчен 200 çынна Чистякова колхозницăн çуртне хăваласа пухнă та çуртăн алăкне питĕрсе хунă, унтан вăл çурта вут тĕртнĕ; çав çуртра вара 200 çын çунса кайнă. Вĕсем хушшинче стариксем, хĕрарăмсем тата ачасем пулнă: 63 çулхи М. П. Платонов; 59 çулхи П. Л. Платонова; 35 çулхи Василий Платонов тата унăн ачисем — 5 çулхи Вячеслав, 3 çулхи Александр; 42 çулхи Н. И. Васильева, унăн хĕрĕсем — 11 çулхи Мария, 9 çулхи Анна тата 5 çулхи ывăлĕ Аркадий, 72 çулхи амăшĕ М. С. Васильева; 64 çулхи К. Г. Чистякова, унăн 13 çулхи ывăлĕ Иван тата ывăлĕн ывăлĕ — 4 çулхи Юрий; 63 çулхи М. И. Смирнов, унăн 58 çулхи арăмĕ Е. М. Смирнова, 27 çулхи хĕрĕ А. М. Смирнова хăйĕн 3 çулхи тата 5 çулхи ачисемпе, 15 çулхи хĕрĕ М. М. Смирнова тата ыттисем те пулнă.

Гжатск районĕнчи Степаники ялĕнче нимĕç захватчикĕсем 35 çулхи Елена Федоровна Ильинана мунчана хупса лартнă та ăна унта 7 кун асаплантарнă, хулăпа, патакпа хĕненĕ, сивĕ шывпа сапнă.

1943 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче вĕсем Степаники ялĕнчи мĕнпур çынсене Ильинана асаплантарса вĕлернĕ çĕре хăваласа пынă, Ильинана вара йывăçран çакса вĕлернĕ.

Гжатск районĕнчи Куликово тата Колесники ялĕсенче фашистсем çав ялсенчи çынсене пурне те пӳртре çунтарса янă.

Ржев хулин вăтаçĕрĕнчи площадьре, ĕлĕк Ленин памятникĕ тăнă çĕрте, Германин 27-мĕш армейски корпусĕн командующийĕ генерал-майор Вейс хушнă тăрăх, хула коменданчĕ майор Куртфельд виселица туса хунă. Çавăнта вăл мирлĕ граждансене темиçе вуншар çынна: Александр Дроздова, Анна Пожарскаяна, Медоциевăна тата ыттисене те çакса вĕлернĕ. Темиçе пин çынна персе вĕлернĕ.

1943 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче Воровский урамĕнчи Палевăн 47-мĕш номерлĕ çуртĕнче фашистсем вĕлернĕ виçĕ хĕрарăмăн тата виçĕ çамрăк ачан виллисене тупнă. Пурлăхне çаратса пĕтернĕ.

Кӳршĕри çуртра Садовăн нимĕç салтакĕсем асаплантарса вĕлернĕ çемьине тупнă: ашшĕпе амăшне персе вĕлернĕ, 12 çулхи хĕрне Раяна штыкпа чиксе вĕлернĕ, 15 çулхи ывăлне Валентина пăшалпа сылтăм куçĕнчен персе вĕлернĕ, 18 çулхи хĕрне Зинăна тытса пусмăрланă, унтан пăвса вĕлернĕ, 5 уйăхри хĕрне Катяна тăнлавĕнчен персе вĕлернĕ.

116-мĕш кварталти картишсенчен пĕринче, пахчара, шăтăкра 8 совет çыннин виллисене тупнă. Вĕсене касса вакласа паллайми туса хунă: 30 çулхи И. В. Соловьевăн тутисене касса татнă, 28 çулхи А. К. Андреевăна штыкпа чиксе вĕлернĕ т. ыт. те.

Тыткăна лекнĕ совет çар çыннисене тискеррĕн тыткалани

Тыткăна лекнĕ совет çар çыннисене массăллăн вĕлерсе пĕтерес тесе, Германин çар влаçĕсем красноармеецсене выçăпа, тифпа тата дизентерипе чирлесе вилмелле туса хураççĕ. Тыткăна лекнисене медицина енчен пулăшу памаççĕ.

Вязьмăра тыткăна лекнисем валли хутман чул сарайĕнче госпиталь тунă пулнă. Чирлисене нимĕнле те сыватман, пăхман та. Куллен унта 20—30 çын вилнĕ. Чирлисене кунне çур котелок шӳрпе панă, çăкăр паман. Е. А. Михеев врач каланă тăрăх: çав госпитальре начарланса кайнипе тата чирсене пула пĕр кунта 247 çын вилнĕ. Кунсăр пуçне, нимĕç салтакĕсем тĕллесе пемелли япала вырăнне тыткăна лекнĕ чирлĕ красноармеецсене суйласа илнĕ те, вĕсене госпиталĕн картишĕпе пынă чухне тĕлле-тĕлле пенĕ.

В. Н. Раздершин хирурга врачсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле çав лагерьте пĕр çĕр выртма тивнĕ. Врачсем çапла каласа параççĕ: асаплантарнисем «çăлăр», «пулăшăр», «мĕншĕн хĕнетĕр», «ох, вилетĕп» тесе кăшкăрнисем лагерĕн пур çурчĕсенчен те çĕрĕпех илтĕннĕ.

Кăнтăрла, апат валеçнĕ вăхăтра, тыткăнрисем кухня патне пухăннă пулнă. Йĕрке кӳрес тесе нимĕç хуралĕ пиççиххинчен гранатине вĕçĕртсе илнĕ те ăна çав ушкăн çине пăрахнă. Темиçе çын вилнĕ, нумай çын аманнă.

1943 çулхи февральте Вязьмăран каялла чакас умĕн фашистсем арестленĕ совет гражданĕсен тата тыткăна лекнĕ красноармеецсен ушкăнне Вязьма çывăхĕнчи Новоторжская станцине илсе кайнă. Выçăпа начарланса çитнĕ çынсене Новоторжская станцинчен лагере илсе кайнă вăхăтра çав çынсенчен нумайĕшĕ халран кайнипе йăвана-йăвана кайнă. Нимĕç хуралĕсем çавăн пеккисене пăшалпа персе вĕлернĕ. Новоторжская станцинчен Вязьмăна çитиччен 43 çынна персе вĕлернĕ.

2-мĕш номерлĕ лагерĕн коменданчĕ — старши унтер-офицер Раутенберг тыткăна лекнĕ совет çыннисене этем халиччен курман пек хаяррăн асаплантарнă.

Сычевка хулине нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн çав хулара, лагерьти питĕ пысăк шăтăкра, тыткăна лекнĕ красноармеецсемпе совет гражданĕсен 3.000 виллине ытла тупнă. Вăл вилесене пăхса тухни çав çынсене тискеррĕн асаплантарнине кăтартса панă: нумайĕшин аллисене, урисене персе хуçнă, пуçшăммисене персе шăтарнă, сăмсисене, хăлхисене касса пăрахнă, куçĕсене чиксе шăтарнă, ар органĕсене касса татнă.

1943 çулхи январьте Харино ялĕнче фашистсем тыткăна лекнĕ 79 красноармееца вылăх картишне хăваласа кĕртнĕ те вĕсене унта чĕрĕллех çунтарса янă.

Корытовка ялĕнче 1941 çулхи ноябрьте нимĕç салтакĕсем красноармеецсене тĕллесе пеме вĕреннĕ, çапла вĕсем 14 çынна персе вĕлернĕ.

1942 çулхи июньре жандармери начальникĕ Шульц капитан хушнă тăрăх, Вязьмăри лагерьтен 5 красноармееца илсе тухнă, хурал салтакĕсем вĕсене тарма хушнă, унтан вĕсем çине пеме тытăннă, виççĕшне çавăнтах персе вĕлернĕ, аманнă 2 красноармееца вара прикладсемпе çапса вĕлернĕ.

Вязьмăра, Комсомольски урамра, красноармеецсенчен пĕри, тротуар хĕррипе юхса выртакан шыва ĕçес тесе, ытти красноармеецсен ушкăнĕнчен пăрăнса кайнă. Хуралласа пыракан нимĕç çав красноармееца прикладпа хĕнесе пĕтернĕ, унтан ăна аяккалла илсе кайнă та персе пăрахнă.

Вязьма станцийĕ çывăхĕнче тыткăна лекнĕ пĕр красноармеец рабочисен столовăйне кĕнĕ те пĕр турилке шӳрпе пама ыйтнă. Ун хыççăн нимĕç хуралçă кĕнĕ те ăна васкаса столовăйран тухма хушнă. Красноармеец шӳрпене çисе яма ирĕк пама ыйтнă. Хуралçă çав красноармееца столовăйран урама илсе тухнă та ăна алăк патĕнчех персе вĕлернĕ.

1942 çулхи декабрьте тыткăна лекнĕ красноармеецсене хуралласа пыракан нимĕç Софья Перовская урамĕнче 2 красноармееца персе вĕлернĕ. Вĕсен виллисем урамра темиçе кун выртнă.

Совет гражданĕсене нимĕç чуралăхне хăваласа кайни

Пачах тулли мар даннăйсем тăрăх, оккупаци вăхăтĕнче фашистсем Германири каторгăллă ĕçе Вязьмăран 5.000 çынна яхăн, Сычевкăран—1.500 çынна, Гжатскпа Ржевран—10.000 çынна яхăн хăваласа кайнă.

1943 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче Германие Вязьма хулинчи гражданинăн Виноградовăн икĕ хĕрне—20 çулти Верăна тата 16 çулти Надеждăна илсе кайнă. Виноградов хăйĕн хĕрĕсене шеллеме тата вĕсене илсе каймасăр хăварма ыйтни çине ответлесе, фашистсем унăн çуртне çунтарса янă.

Куликово тата Ивановская ялĕсенче нимĕçсем 31 çынна суйласа илнĕ те Германие хăваласа кайнă. Унта пурăнакан ытти çынсене вĕлерсе пĕтернĕ, ялĕсене вара çунтарса янă.

Андреевское тата Дятлово ялĕсенчен нимĕç влаçĕсем Германие 43 çынна хăваласа кайнă: 40 çулти Василий Никонова, 15 çулти Раиса Малининăна, 40 çулти Мария Родионовăна, 18 çулти Василий Чистова, 33 çулти Николай Воронова, 48 çулти Татьяна Халдеевăна, 41 çулти Николай Сафонова, 45 çулти Мария Колосовăна, 15 çулти Анна Фетисовăна, 17 çулти Егор Веткина, 15 çулти Валентина Веткинăна тата ыттисене те хăваласа кайнă.

Нимĕçсем Германие каторгăллă ĕçе хăваласа кайнă граждансен списокĕсенче 50 çултан иртнĕ тата 15 çултан çамрăк çынсем çук. Ватăраххисене тата çамрăкраххисене пурне те нимĕçсем пĕр шеллемесĕр вĕлерсе пĕтерессĕ.

Хуласене, пурăнмалли çуртсене, культурăллă учрежденисене тата чиркӳсене аркатни

Нимĕçсен çар влаçĕсем пурăнмалли çуртсене, культурăллă учрежденисене, предприятисемпе чиркӳсене çаратаççĕ тата аркатса пĕтерессĕ. Çаксем вара дисциплинăна пăсакан çар чаçĕсем туса пыракан уйрăм актсем мар, çăран аслă командованийĕ малтанах палăртса хунă паллă система пулса тăрать.

Ржев, Сычевка тата Гжатск районĕсенчи хуласемпе ялсене аркатассине мирлĕ халăха, çавăн пекех тата культурăллă учрежденисемпе чиркӳсене çаратассине Штудниц генерал-лейтенантăн 87-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи, Браун генерал-майорăн 129-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи, Мюллер генерал-майорăн 72-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи, Эвердин генерал-майорăн 14-мĕш мотодивизийĕнчи, Шонеман генерал-майорăн 337-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи, Грейнер генералăн 268-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи çар чаçĕсем туса пынă.

Вязьмăпа Гжатскра 35-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-майор Меркер, 252-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-майор Шефер, 7-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ генерал-майор Ропперт ятарласа факельщиксемпе минерсен отрячĕсене тунă, вĕсем пурăнмалли çуртсене, шкулсене, театрсене, клубсене, музейсене, библиотекăсене, больницăсене, чиркӳсене, магазинсене, заводсене вут тивертнĕ тата сирпĕте-сирпĕте янă, хăйсем чакса пыракан çул çинче кĕлпе ванчăксем кăна тăратса хăварнă.

Вязьмăра 1.500 çуртран пĕтĕмпе те йывăçран тунă 51 çурт кăна юсавлă тăрса юлнă. Кунта 1943 çулти февралĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 6-мĕшне çитиччен вăхăтра нимĕçсем 476 взрыв туса ирттернĕ, çав вăхăтра икĕ больницăна, ача çуратмалли çурта, хĕрарăмсемпе ачасен консультацийĕсене, туберкулезпа чирлисен диспансерне, туберкулезпа чирлисен санаторине, 2 поликлиникăна тата хулари аптекăна, 15 шкула, учительсен институтне, медицинăн икĕ шкулне, хулари театра, кинотеатра, центральнăй библиотекăна, пионерсен çуртне, рабочисен 4 клубне, ачасен çуртне, ачасен 5 яслине тата 4 садне, учительсен çуртне, Хĕрлĕ Çар çуртне, çуллахи театра, колхозник çуртне, госбанк çуртне, перекет кассисен, хула совечĕн, райисполкомăн, хулари суту-илӳ отделĕн, райсоюзăн, халăх сучĕн тата прокуратурăн çурчĕсене; хулари мунчапа çăкăр завочĕн çурчĕсене пĕтерсе тăкнă. Хулари икĕ парка касса пĕтернĕ. Вязьмăран тухса кайнă чухне нимĕçсем çăлсене нумайĕшне наркăмăш ярса хăварнă, икĕ чиркĕве сирпĕнтерсе янă, Егорьевски, Зуевски, Фроловски, Смоленски тата Сусленков кĕперĕсене сирпĕнтерсе янă.

Гжатскра 1.600 çуртран 300 çурчĕ кăна юсавлă тăрса юлнă. Хулари электростанцине, водопровода, больницăна, ялхуçалăх техникумне, техникумăн икĕ общежитине, учительсен çуртне, ачасен яслисене, ачасен Ленин ячĕпе тăракан çуртне, кинотеатра, хулари клуба, Хĕрлĕ Çар клубне, пекарньăна, мунчана, промысла кооперацин «Металлист» заводне, инвалидсен çуртне, районри ветлечебницăна, райвоенкомат çуртне тата государствăн ытти предприятийĕсемпе учрежденийĕсене сирпĕнтерсе тата çунтарса янă.

Гжатскри чиркӳсене витесемпе складсем туса хунă пулнă. Благовещенски чиркĕвĕнче нимĕçсем мăйракаллă шултăра выльăхсене пусмалли вырăн туса хунă. Предтеченски чиркĕвне, Казански соборне сирпĕнтерсе янă. Хулари çăлсене наркăмăш ярса е минăсем хурса хăварнă.

Сычевкăра 1.030 пурăнмалли çуртран 770 çуртне сирпĕнтерсе тата çунтарса янă. Музея çунтарса янă, унта 5.000 картина ытла пĕтнĕ, вĕсем хушшинче Репинăн, Левитанăн, Перовăн, Айвазовскин, Коровинăн тата ыттисен картинисем, Антокольскин скульптурисем пулнă, XVII-мĕш, XVIII-мĕш, XIX-мĕш ĕмĕрсенчи мастерсем ылттăнран, кĕмĕлтен тата бронзăран тунă япаласем пулнă.

Музейăн историпе краеведени отделĕнче историччĕнхи çынсен хĕçпăшалĕсен хаклă ушкăнĕ пĕтнĕ.

Виçĕ вăтам тата икĕ пуçламĕш шкулсене, ФЗО шкулне, колхознăй техникума, учительсен çуртне, пионерсен çуртне, библиотекăна, больницăна, столовăя, ачасен икĕ çуртне, шыв башнине, хулари амбулаторине, телеграфа, радиоузела тата ытти çуртсене те сирпĕнтерсе тата çунтарса янă.

Мартăн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, Сычевкăран тухса каяс умĕн, нимĕç оккупанчĕсем 7 чиркĕве пурне те, вăл шутрах: авалхи Старообрядчески тата Кладбищенски чиркӳсене, соборпа монастыре, сирпĕнтерсе янă.

Фашистсем вырăс çыннисен тĕн йăлисенчен мăшкăлаççĕ. Сычевкăра вĕсем турра кĕлтумашкăн Кладбищенски чиркĕве уçма ирĕк панă. Ĕненекенсем чиркĕве праçник чухнехи пек тумланса пынă, вара нимĕçсем чиркĕве хупăрласа илнĕ те унтан ĕненекенсене хăваласа кăларса çаратнă.

Сычевка районĕнче нимĕç оккупанчĕсем 248 ялтан 137 ялне ним юлмиччĕнех çунтарса янă.

Вырăссен авалхи хулине — Ржева нимĕç оккупанчĕсем ванчăксен купи туса хунă, 5.443 çуртран 495 çурчĕ кăна хăшпĕр таран сыхланса юлнă. Çапла, фашистсем драма театрне, кинотеатра, краеведени музейне, пионерсен дворецне, 60.000 кĕнеке усракан центральнăй библиотекăна, виçĕ клуба, пуçламĕш тата вăтам шкулсен 22 çуртне, ачасен 21 садне, учительсен институтне, планово-экономически тата ялхуçалăх техникумĕсене, фельдшерсемпе акушерсен шкулне, поликлиникăна, хĕрарăмсен консультацине, амбулаторие, больница хулине, мунчана, электростанцие тата ытти учрежденисене аркатса пĕтернĕ тата çунтарса янă. Чугунçул хуçалăхĕпе вагонсене пурне те ватса пĕтернĕ. Промышленность предприятийĕсен оборудованийĕсене Германие турттарса кайнă.

307-мĕш номерлĕ заводăн, спирт завочĕн, çу тăвакан заводăн, механически заводăн, вăрман завочĕн тата пурçăн пĕтĕрекен, тӳмесем тăвакан тата ытти фабрикăсен корпусĕсене çунтарса е аркатса пĕтернĕ. Нимĕçсем Атăл урлă каçакан чугунçул кĕперне тата Колынка юханшывĕ урлă каçакан 5 кĕпере сирпĕнтерсе янă.

Ржевра фашистсем садсемпе парксене пĕр йывăç юлмиччен касса пĕтернĕ. Успенски собора, Варварински, Единоверчески, Екатерининински, Рождественски, Ильински, Смоленски, Казански, Иккĕмĕш Покровски старообрядчески, Виççĕмĕш Покровски старообрядчески, Предтеченски, Владимирски, Спасски, Благословленная старообрядчески чиркӳсене тата Польша костелне аркатса пĕтернĕ.

Покровски чиркĕве нимĕçсем çаратнă та хаклă япаласене пурне те турттарса кайнă. Чиркӳре вĕсем салтаксем валли казарма тунă. Андрей Попов священника персе вĕлернĕ. Каялла чакас умĕн фашистсем Покровски чиркĕве мина хунă та унта мирлĕ халăха 200 çынна яхăн хăваласа пухнă. Унта кайма килĕшменнисене е чиркӳ патне çитме пултарайманнисене — арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене — фашистсем «нимĕç влаçĕсене пăхăнманшăн» пере-пере вĕлернĕ. Хулара пурăнакансене чиркĕве хăваласа кĕртнĕ те алăкĕсене питĕрсе лартнă, анчах чиркĕве сирпĕнтерсе яма ĕлкĕреймен, — Хĕрлĕ Çарăн хулана

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Икĕ уйăхран Оборонăн Государственнăй заемĕ тухмалла, çавăнпа, халăха ытла пысăк тăкак кăларттарас мар тесе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ граждансемпе гражданкăсенчен кăçалхи апрелĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа Хĕрлĕ Çар фондне хăйсен ирĕкĕпе пĕчен е коллективпа укçа хывмашкăн чарăнма ыйтать.

Нимĕҫсен фашистла захватчикĕсем Смоленск облаҫĕнчи Вязьма, Гжатск тата Сычевка хулисенче тата Калинин облаҫĕнчи Ржев хулинче тунă тискер ĕҫсем ҫинчен

ЮЛАШКИ

кĕрсе кайнă чаҫĕсем вĕсене ҫак тискер ĕҫе тума чăрмантарнă.

Фашистла нимĕҫ захватчикĕсен тата вĕсемпе пĕр каварлисен тискер ĕҫĕсене тата вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, общественнăй организацисене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиене тĕпчесе палăртас тĕллĕшпе ĕҫлекен Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси ҫапла шутлать: мирлĕ граждансене тата ҫар ҫыннисене асаплантарса вĕлерсе пĕтернĕшĕн, совет ҫыннисене нимĕҫ чуралăхне хăваласа кайнăшăн, Вязьмăпа Гжатска, Сычевкăпа Ржева, ҫавăн пекех тата саласемпе ялсене аркатса пĕтернĕшĕн Германин 4-мĕш армийĕн командующийĕ генерал-полковник Хейнриц тата ҫав армине кĕрекен 7, 37, 98, 252, 268-мĕш пехотнăй дивизисемпе жандармсен корпусĕн командирĕсем: генерал-майор Роппepт, генерал-майор Меркер, генерал-майор Гараис, генерал-майор Шефер, генерел-майор Грейнер, жандармсен корпусĕн командирĕ генерал Шиман; Германин 9-мĕш армин командующийĕ генерал-полковник Модель, ҫав армие кĕрекен 27-мĕш армейски корпусăн командирĕ генерал-майор Вейс, 6, 72, 87, 102, 129, 337-мĕш пехотнăй дивизисен командирĕсем: генерал-лейтенант Гросман, генерал-майор Мюллер, генерал-лейтенант Штудниц, генерал-майор Физлер, генерал-майор Браун, генерал-майор Шонеман, генерал-майор Эвердин; Вязьма хулин бургомистрĕ Арнольд Штампп, гестапо начальникĕ барон Адлер; Сычевка хулин коменданчĕ обер-лейтенант Кислер, тыткăна лекнĕ ҫар ҫыннисен лагерĕсен начальникĕсем старши унтер-офицерсем Фокс тата Раутенберг; Ржев хулин ҫар коменданчĕ майор Куртфельд, Гжатск хулин коменданчĕ обер-лейтенант Лейман ответлă тесе шутлать. Вĕсем СССР халăхĕсене хирĕҫ хăйсем тунă нихăҫанхи пек мар тискер ĕҫсемпе преступленисемшĕн хаяр ответ тытма тата пысăк наказани

Колхозсем ҫуракине хатĕрленсе ҫитнине тĕрĕслетпĕр

Курăннă ҫитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле

СОВЕТСКОЕ, апрелĕн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паянхи куна ҫуракине тухма мĕнле хатĕрленнине 53 колхозра пăхса тухнă. Тĕрĕслӳ нумай ҫитменлĕхсене кăтартса пачĕ. Тĕрĕсленĕ 53 колхозран 7 колхозра ҫурхи тулă вăрлăхĕ 93 центнер ҫитменни, 9 колхозра пурĕ 347 центнер сĕлĕ вăрлăхĕ ҫитменни палăрчĕ. Чылай ҫĕрте комиссисем ҫитменлĕхсене хăвăрт пĕтерес тĕллĕшпе массăна мобилизацилесе конкретнăй ĕҫсем туса иртерĕҫҫĕ. Тĕслĕхрен, «Ядро» колхозăн 88 центнер вăрлăхлăх сĕлĕ ҫитменнине курсан, комисси колхоз правленине кӳршĕри колхозран кивҫен илме договор тутарчĕ. Ҫав кунах Доронин ячĕпе тăракан тата «Красное Сормово» колхозсем «Ядро» колхоза вăрлăхлăх сĕлĕ парса пулăшма пулчĕҫ.

Анчах калас пулать, хăшпĕр комиссисем хăйсен ĕҫне ҫиелтен тума пăхаҫҫĕ. Свешников юлташ ертсе пыракан комиссин Хочашево ялсоветĕнчи колхозсем ҫуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелле пулнă. Комисси «Красное Хочашево» колхоза пырса ĕҫ мĕнле тăнине ҫиелтен ҫеҫ ыйтса пĕлнĕ, тĕплĕн интересленмен. Ялсоветĕнчи тепĕр колхоза—«Труд» колхоза кайса та пăхман. ВКП(б) райкомĕ Свешников юлташа колхозсене татах та тепĕр хут тухса тĕплĕн тĕрĕслеме, ҫитменлĕхсене пĕтерес енĕпе конкретнăй ĕҫсем тума хушрĕ.

Ф. Новиков.

Британи ҫар миссийĕн пуҫлăхĕ генерал-лейтенант Мартель СССР-а килсе ҫитни

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Мускава Британин СССР-ти ҫар миссийĕн пуҫлăхĕ генерал-лейтенант Гиффорд ле Кейн Мартель килсе ҫитнĕ.

Аэродром ҫинче Мартель господина Хĕрлĕ Ҫарăн генеральнăй штабĕн представителĕ — генерал-майор Н. И. Дубинин, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри Ҫыхăну Пайĕн начальникĕ — полковник В. Н. Евстигнеев, Тинĕс-Ҫар Флочĕн Комиссариачĕн Тулашри Ҫыхăну Пайĕн начальникĕ — 1-мĕш рангри капитан И. П. Египко тата Британи ҫар миссийĕн членĕсем кĕтсе илнĕ.

Нимĕҫ авиацийĕ Ленинград районĕ ҫине вĕҫсе пырса тапăнни

Апрелĕн 3—4-мĕшĕсенче нимĕҫ авиацийĕ Ленинград ҫывăхĕнчи объектсем ҫине тата Ленинград ҫине вĕҫсе пырса тапăнма хăтланнă. Хула ҫине вĕҫсе кĕнĕ уйрăм самолетсем йĕркесĕррĕн бомбăсем пăрахнă, бомбăсем тунă сиен пысăк мар. Сывлăш ҫапăҫăвĕсенче тата зенитнăй артиллерипе пĕрсе нимĕҫĕн 42 бомбардировщикне пĕрсе ӳкернĕ. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Малта пыракан колхозсемпе танлашмалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Хамăр корр.**). Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татни—фронт ыйтăвĕсене тивĕҫтерни пулса тăрать. Ҫавна шута илсе, Кĕҫĕн Субарти «Красная Чувашия» колхоз 1943 ҫулшăн государствăна аш-какай парса татрĕ. Ҫавăн пекех колхозниксем те хăйсен 1943 ҫулхи парăмĕсене 80 процент парса татнă. И. Гурьев, К. Хрисанов, Н. Осипов тата ыттисем те аш-какай парас обязательствăсене чи малтан пурнăҫларĕҫ.

Ҫак вăхăтрах хăшпĕр колхозсем государство умĕнчи парăмсене срокра парса татма тăрăшмаҫҫĕ. «Буйга» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те начар ĕҫлет, государствăна аш-какай парас плана та тултармасть. Ку колхоз иртнĕ ҫулхи обязательствăна та пурнăҫламан, кăҫалхи ҫулшăн та аш-какай нимĕн чухлĕ те паман.

«Буйга» колхоз председателĕн вăл ертсе пыракан колхоз государствăпа фронт умĕнче парăмлă пулнине ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ. Малта пыракан колхозсемпе танлашма тăрăшмалла.

С. Шадин.

Клевер акма тухрĕҫ

ШАХАСАН, апрелĕн 6-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Паян районри пур колхозсем те клевер акма тухрĕҫ. «Активист», Ямбахри «Майăн 1-мĕшĕ», Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозсем клевер акса пĕтернĕ.

«Майăн 1-мĕшĕ» колхоз (председателĕ Александров юлташ) колхозниксемпе пĕрле клевер акнă ҫĕрте хăй пример кăтартса ĕҫлерĕ. Агитаторсем ака тăваканcем патĕнче пулса хаҫатсем вуласа пачĕҫ. Стена хаҫачĕн ҫураки вăхăтĕнчи пĕрремĕш номерĕ тухрĕ. Ана та ака тăваканcем патне илсе тухса вуласа пачĕҫ. Колхозниксем 12 гектар клевера пĕр кун хушшинче акрĕҫ, ҫапла плана ăнăҫлăн пурнăҫларĕҫ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз 97, «Активист» колхоз 16, Сителти «Победа» колхоз 25, «Красный Октябрь» колхоз 30 гектар ҫине клевер акса хăварчĕҫ.

Колхозниксемпе колхозницăсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн 1943 ҫулта ялхуҫалăхне аталантармалли планĕ ҫинчен» йышăннă постановление сӳтсе-яваҫҫĕ. Партипе правительство постановленине колхозниксем пур ҫĕрте те ырласа йышăнаҫҫĕ, 1943 ҫулхи ҫуракине лайăх туса ирттерме хатĕрленеҫҫĕ.

В. Веселов.

Ют ҫĕршывсенче

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ПАРИЖ ҪЫВĂХĔНЧИ РЕНО ЗАВОЧĔСЕНЕ ТАПĂННИ ҪИНЧЕН ТĔПЛĔНТЕРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе ҫапла пĕлтереҫҫĕ: апрелĕн 4-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсем Париж ҫывăхĕнчи автомобильсемпе ҫар хатĕрĕсен Рено завочĕсене тапăннă вăхăтра танксемпе бронемашинăсем тăвакан цехсен виҫĕ пайĕнчен икĕ пайне пĕтернĕ. 500 бомбăна яхăн тӳрремĕнех лекнине палăртнă.

Рено завочĕсене тунă сиен 400 миллион франка ҫитет тесе шутлаҫҫĕ

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔҪĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви ҫапла пĕлтернĕ: апрелĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух ҫĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн пысăк соединенийĕсем ҫурҫĕр-хĕвеланăҫ Германи ҫине вĕҫсе пырса Кильри тинĕс-ҫар авиабазисене тата карапсем тăвакан верьфсене тапăннă. Пырса тапăннă районта вăйлă пушарсем тухнă. 12 бомбардировщик ҫав операциран таврăнман.

Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕнче Англин истребительнăй тата бомбардировочнăй авиаци самолечĕсем Ҫурҫĕр Франціе, Бельгие тата Голландие тапăннă. Бомбардировщиксем Канри аэродрома, Сенбриенри чугунҫул объекчĕсене тата Роттердамри карапсем тăвакан верьфсене атакăланă. Истребительнăй бомбардировщиксем Дьеппри доксене тата Абвильри сортировка станцийĕсене атакăланă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН МАРТ УЙĂХĔНЧИ ĔҪĔСЕН ИТОГĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, март уйăхĕнче Англи самолечĕсем Германи ҫине 8.000 тонна ытла фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Виҫĕ хут Берлин ҫине, икĕ хут Эссен ҫине вĕҫсе пырса тапăннă. Кунсăр пуҫне Гамбург, Нюрнберг, Мюнхен, Штутгардт, Дуисбург тата Бохум хулисем ҫине вĕҫсе пырса тапăннă. Кашни кун кăнтăрла тапăннисемсĕр пуҫне тата 21 хут ҫĕрле тапăннă. Истребительнăй авиаци те ҫавăн пекех тăшмана кашни кунах тапăннă.

ТУНИСРИ ВĂРҪĂ ĔҪĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Ҫурҫĕр Африкăри войскисен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕнче Америка войскисем Эль-Геттар районĕнче атакăсем туса пынă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк вăйĕсем Неаполь гаванĕне тата аэропортне атакăланă. Бомбăсем нумай карапсем ҫине тата ытти объектсем ҫине тӳрремĕнех ӳкнине паллă тунă. Пристань районĕнче тăшманăн ҫĕр ҫинче ларнă нумай самолечĕсене пĕтернĕ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаҫатăн ĕнерхи номерĕнче пичетленнĕ «СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен» ятлă материалăн пĕрремĕш предложенинче йăнăш кайнă. «1943 ҫулхи» тенине «1942 ҫулхи» тесе вуламалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂҪĔ

Парти активĕн районри пухăвĕ

ҪĔМЕРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Мартăн юлашки кунĕсенче парти активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) Обкомĕн 14-мĕш пленумĕн итогĕсем ҫинчен тата фронтовиксен ҫемьисене пулăшас ĕҫе лайăхлатас тĕллĕшпе тумалли ĕҫсем ҫинчен сӳтсе-яврĕҫ.

Пĕрремĕш ыйтупа парти райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ доклад туса пачĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пленумĕнче сӳтсе-явнă ыйтусенче палăртнă ҫитменлĕхсем Ҫĕмĕрле районĕнчи парторганизацисенче те пур. 1942 ҫулта парти членне 31 ҫынна, парти кандидатне — 45 ҫынна ҫеҫ илнĕ. Кăҫал ку енĕпе ĕҫ кăштах лайăхланни курăнать: пĕррeмĕш кварталта парти ретне пĕтĕмпе 48 ҫынна явăҫтарнă. Анчах уйрăм парторганизацисем ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ. Райпромкомбинатра, чугунҫул станцинче, торф предприятинче, хула советĕнче, лесхозра парти ретне пĕр ҫынна та илмен.

Ҫамрăк коммунистсем хушшинче куллен ĕҫлеменни уйрăмах суту-илӳ отделенинчи, чугунҫул станцинчи организацисенче палăрать. Ҫавна пула вара парти кандидачĕсем вăхăтра члена куҫаймаҫҫĕ. Районри парторганизацинче ВКП(б) кандидатĕнче тăракансенчен 40 процентĕн кандидатра тăмалли срок иртсе кайнă.

Парти организацисен комсомол организацисене ертсе пымалла. Анчах ВКП(б) райкомĕ те, пуҫламĕш организацисем те ку тĕллĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ. Паянхи куна 8 колхозра комсомол организацисем ҫук, комсомол йышĕ вăраххăн ӳсет. Хутарти, Мăн Улхашри, ҫыхăну конторинчи организацисем кăҫал виҫĕ уйăх хушшинче пĕр ҫынна та комсомол ретне илмен. ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсем час-часах ялсенче пулаҫҫĕ. Анчах комсомол ĕҫĕпе сахал интересленеҫҫĕ.

Парти активĕн пухăвĕ районра ҫуракине хатĕрленес ĕҫ ҫителĕксĕр пынине палăртрĕ. Чылай колхозсенче ку таринччен те вăрлăхсем, ялхуҫалăх машинисем хатĕрлесе хуман. Ҫуракине хатĕрленес тĕлĕшпе рай ҫĕрĕҫ пайĕ колхозсене конкретлăн ертсе пыни курăнмасть.

Уйрăм колхозсем вăкăрсемпе ĕнесене кӳлсе ҫӳреме вĕрентес ĕҫе тивĕҫлипе туса пыраҫҫĕ. Питушкинăри «Вперед» колхоз 1 вăкăра, 2 тынана кӳлсе ҫӳреме вĕрентнĕ. Ҫак колхозри колхозниксем Иван Ваструшкин, Мария Макарова, Илья Углев хăйсен ĕнисене кӳлсе ҫӳреме вĕрентрĕҫ. Ака вăхăтĕнче вĕсем те уйри ĕҫе хутшăнмалла. Ҫав вăхăтрах ку ĕҫ пĕтĕм районĕпе илсен ҫителĕксĕр пулса пырать.

Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн оборона промышленность енĕпе ĕҫлекен секретарĕ Крылов юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл районра ҫуракине хатĕрленес ĕҫ ҫителĕксĕр пынине палăртса, уйрăм руководительсен ĕҫне хытă критиклерĕ.

Пухура иккĕмĕш ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕ Носков юлташ доклад туса пачĕ.

Районри партактив хăй сӳтсе-явнă ыйтусем тăрăх конкретнăй решенисем йышăнчĕ.

Вулав ҫурчĕн ĕҫне хакламаҫҫĕ

Комсомольски районĕнчи Нĕркеч ялсовечĕ ҫумĕнчи вулав ҫурчĕ 2-мĕш ҫул ĕнтĕ хупă ларать. Кунта вулав ҫурчĕ валли пысăк клуб пур, анчах унăн чӳречисене ҫĕмĕрсе пĕтернĕ, клубне колхоз амбарĕ туса унта вăрлăхлăх тырă хунă. Ялсовет председателĕнчен. Сергеевран мĕншĕн вулав ҫуртне ĕҫлеттерместĕр тесе ыйтсан: «ҫамрăксем ытла тĕпĕртетеҫҫĕ, ҫавăнпа ĕҫе ямастпăр», тесе ответлет.

Районри ытти вулав ҫурчĕсенче те йĕркелĕх ҫук. Нихăш вулав-ҫурчĕ ҫумĕнче те стена хаҫачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăмаҫҫĕ.

Районри ҫутĕҫ пайĕн вулав ҫурчĕсене лайăх ĕҫлеттерес пирки тивĕҫлĕ мерăсем йышăнмалла.

Н. Виноградов.

Пушăлла ҫӳрекен автомашинăсемпе усă курасси ҫинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ пушăлла ҫӳрекен автомашинăсемпе усă курасси ҫинчен постановлени йышăннă.

Автотранспортăн Чăваш АССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи Управленине пушăлла ҫӳрекен автомашинăсем ҫине грузсем тиесмине йĕркелесе яма хушнă.

Автотранспортăн ЧАССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи Управленийĕн начальникне Полянин юлташа Шупашкар хулинче пушăлла ҫӳрекен автомашинăсемпе усă курассине пурнăҫа кĕртес тĕллĕшпе ĕҫлекен транспортпа экспедици конторине организацилеме хушнă.

Ҫавăн пекех Етĕрне, Ҫĕрпӳ, Канаш тата Шупашкар хулисенче, Шупашкар чугунҫул станцинче, Шупашкарти пристаньре пушăлла ҫӳрекен автомашинăсем ҫине грузсем тиесе ярас тĕллĕшпе ĕҫлекен агентствăсене тума хушнă. Улатăрпа Ҫĕмĕрле хулисенче, Вăрмар станцинче ҫав агентствăсен ĕҫĕсене туса пыма автотранспортăн унти конторисемпе агентствисене хушнă.

Совнарком Канаш, Ҫĕрпӳ, Шупашкар тата Етĕрне хулисенче грузсене вăхăтлăха сыхласа усрамалли складсем тума хушнă.

Етĕрне — Шупашкар тата Шупашкар — Канаш тракчĕсем ҫинче диспетчерски-контрольнăй постсем организацилеме хушнă.

Совнарком предприятисене, хуҫалăх организацийĕсене тата мĕнпур ведомствăсене грузовой автомашинăсене трактсем тăрăх пушăлла ҫӳретме чарнă. Предприятисен, хуҫалăх организацийĕсен тата ведомствăсен руководителĕсене хăйсен пушăлла ҫӳрекен автомашинисене пĕр хирĕҫсе тăмасăрах грузсем тиесе турттарма ҫĕре пама хушнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 5-мĕшĕнчи каҫхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 5-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 4-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиацин чаҫĕсем нимĕҫсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, тăшманăн артиллерипе минометсен 5 батарейине пусарнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем оборонăллă ҫапăҫусем туса пынă. Ирхине тăшман тепĕр хут атака пуҫласа янă. Нимĕҫ танкĕсемпе пехоти, пирĕн подразделенисене хупăрлас шутпа, икĕ енчен ҫапăҫса пынă. Пĕр чаҫăн боецĕсем гитлеровецсен атакине сирсе пăрахса 4 танка персе ӳкернĕ тата нимĕҫ пехотин пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăҫ фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене ҫирĕплетсе разведка туса пынă. Артиллери тата пехота персе тăнипе тăшманăн 200 ҫити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн летчиксен пĕр ушкăнĕ тăшман тылĕнчи чугунҫул станцийĕ ҫине вĕҫсе пырса тапăннă. Сасартăк тапăннине пула, пирĕн летчиксем бомбăсем пăрахса каялла вĕҫсе кайма тытăнсан тин нимĕҫ зенитчикĕсем тĕлсĕр пеме пуҫланă. Бомбăсем пăрахнипе станцири тĕп сооруженисене тата чугунҫул линине аркатса тăкнă.

* * *

Кубань ҫинче пирĕн войскăсем, икĕ кун хушши хаяррăн ҫапăҫнă хыҫҫăн, халăх пурăнакан темиҫе пункта йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаҫсем шурлăхлă вырăнта наступлениллĕ ҫапăҫусем туса пынă. Совет боецĕсем тăшманăн тĕреклетнĕ вырăнне пырса кĕрсе унăн окопĕсен икĕ линине йышăнса илнĕ. Малтанхи вырăна тепĕр хут йышăнас шутпа гитлеровецсем пехотăн пĕр полкне ытла контратакăна янă. Пысăк ҫухатусем тӳстерсе, тăшман контратакине сире-сире пăрахнă. Ҫапăҫу хирĕнче ҫĕршер нимĕҫ аманса тата вилсе выртса юлнă. 4 оруди, 23 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра лейтенант Серебряков ертсе пыракан подразделени тăшман тăнă ҫĕре ҫĕмĕрсе кĕнĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн темиҫе дзотне гранатăсем ывăтнă та унта пулнă гитлеровецсене пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕҫсен карательнăй отрячĕ мартăн 27-мĕшĕнче Калинин облаҫĕнчи пĕр яла пырса кĕнĕ те колхозниксен ҫурчĕсене вут тĕртме пуҫланă. Партизансен икĕ отрячĕ пĕрлешсе, нимĕҫсене атакăланă. Совет патриочĕсем карательсене сапаласа янă, ҫав ҫапăҫура нимĕҫсен 70 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Партизансем 1 оруди, 4 пулемет, 1 миномет, 14.000 патрон тата нумай минăсем тытса илнĕ. Калинин облаҫĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕҫсен эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоза тата боеприпассемпе ҫар техники тиенĕ 30 вагона аркатса тăкнă.

* * *

Кубань ҫинче румынсен 19-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен ушкăнне тыткăна илнĕ. Тыткăна лекнĕ салтак Ион Деметер ҫапла каласа панă: «Февраль уйăхĕччен румынсен 19-мĕш дивизийĕн командирĕ нимĕҫ — генерал Шмидт пулнă. Вырăс авиацийĕ вĕҫсе пырса тапăннă вăхăтра ăна амантнă пулнă. Халĕ дивизи командирĕ полковник Вебер — вăл та нимĕҫех. Салтаксем ăна «нимĕҫ йытти» тесе чĕнеҫҫĕ. Вырăссем станци патне пырса ҫитсен, нимĕҫсем часах пире пăрахса тарчĕҫ. Ҫакăн пирки салтаксем кăна мар, офицерсем те питĕ тарăхрĕҫ. Салтаксенчен нумайĕшĕ боеприпассене, хĕҫпăшала пăрахрĕҫ те каялла чакрĕҫ. Хăш-пĕрисем ҫуртсенче пытанчĕҫ, вырăссем пырса ҫитсен тыткăна парăнчĕҫ».

* * *

Курск облаҫĕнчи Яковлево ялне оккупациленĕ вăхăтра нимĕҫсен фашистла ирсĕрĕсем вырăнти 150 ҫынна, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене, нумай вĕлернĕ. Анна Булавина колхозницăна, Василий Подвигин, Андрей Беляев, Гаврил Кобзарев, Михаил Булавин, Иван Куприянов колхозниксене тата ыттисене те палачсем ҫакса вĕлернĕ. Фашистла тискерсем христиенсенчен темĕн тĕрлĕ мăшкăлланă. Нимĕҫ салтакĕсем колхозниксен ăшă тумтирĕсене тата ҫăматтисене хывса илсе, вĕсене ҫарамас тата ҫарауран сивĕре ĕҫлеттернĕ. Ялтан каялла чакса кайнă чухне гитлеровецсем колхоз арманне, ҫу ҫапакан армана тата ытти ҫуртсене те, ҫавăн пекех колхозниксен 30 килне ҫунтарса янă.

ПĔЛТЕРӲ

СССР Государство банкĕн Чăваш республикинчи Контори халăха ҫакăн ҫинчен пĕлтерет: Госбанкăн отделенийĕсем пур граждансенчен те яглă укҫа вклачĕсем йышăнаҫҫĕ.

Вкладсене Государство Банкĕн отделенийĕсем йышăнаҫҫĕ, вкладăн сумми 3.000 тенкĕрен кая пулмалла мар. Вклад хывнă хыҫҫăн хывакан укҫасене вара кирек мĕн чухлĕ пулсан та йышăнаҫҫĕ.

Вкладчиксем хăйсен вклачĕсене хăйсен ирĕкĕпе тыткалаҫҫĕ. Вкладчик хăйĕн вклачĕ тăрăх укҫа пĕтĕмпех е пĕр пайне ыйтсанах, ăна вклад кĕнекине кăтартсан укҫа параҫҫĕ.

Государство Банкĕ вкладсем ҫинчен никама та пĕлтермест. Вкладсем ҫинчен никама та пĕлтермелле мар йĕркене пăснăшăн Государство Банкĕн работникĕсене Уголовнăй йĕркепе ответ тыттараҫҫĕ.

Вкладсене никам та тĕкĕнме пултараймасть. Суд органĕсем тата Уголовнăй ĕҫсене йĕркелекен следстви органĕсем постановлени йышăнмасăр вкладсене арестлеме е вĕсенчен укҫа шыраса илме юрамасть.

Вкладсене ҫакăн пеккисене йышăнаҫҫĕ:

а) ыйтсан памалли вклад; ун тăрăх укҫа (пĕтĕмпех е пĕр пайне) кирек хăш вăхăтра та параҫҫĕ;

б) срокла вклад; ăна 6 уйăхран кая мар срока йышăнаҫҫĕ;

в) условиллĕ вклад; ăна укҫа хывакан ҫын кăтартса панă условисем килсе ҫитсен ҫеҫ тыткалама юрать;

г) тĕллевлĕ вклад; ăна вкладчик хăй кăтартнă тĕллев валли хывать.

Вкладчик доходă процент халлĕн илет: ыйтсан памалли вклад тăрăх тата условиллĕ, тĕллевлĕ вкладсем тăрăх ҫулталăкне 3%, срокла вклад тăрăх 5% тӳлеҫҫĕ.

Вклад тăрăх кĕрекен доходран тата наследство йĕркипе куҫакан вкладран налогсем илмеҫҫĕ.

Вкладчик хăйĕн вкладне хăйĕн законлă наследникĕсене ҫеҫ мар, кирек кама та, кирек мĕнле организацие те халалама пултарать

Вкладчик хăйĕн вкладĕнчи укҫана Государство Банкĕ урлă хăйĕн ячĕпе е ытти ҫын, учреждени е организаци ячĕпе Госбанкăн кирек хăш отделенине те куҫарма пултарать.

3—3

СССР Госбанкĕн Чăваш республикинчи Контори.

Шупашкарти энергетика техникумĕ (ĕлĕк Строительнăй техникум пулнăскер) I-мĕшпе II-мĕш курссене вĕренме ҫĕнĕрен пухасси ҫинчен пĕлтерет

Техникум хуласенчи электростанцисемпе электросеть валли техник-электриксем тата механиксем хатĕрлет. Техникумра 3 ҫул та 4 уйăх вĕренмелле. 15 ҫултан пуҫласа 30 ҫула ҫитнĕ арҫынсемпе хĕрарăмсене илеҫҫĕ, производствăран уйăрса вĕрентеҫҫĕ.

1-мĕш курса ҫак специальноҫсем тăрăх илеҫҫĕ: 1) техник-электриксем тата 2) дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механиксем. II-мĕш курса—дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механик специальноҫĕпе илеҫҫĕ.

Заявленисене апрелĕн 10-мĕшне ҫитиччен йышăнаҫҫĕ. Заявленисемпе пĕрле ҫакăн пек документсем тăратмалла: а) автобиографи, б) туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухни ҫинчен калакан свидетельство, в) виҫĕ фотокарточка (ҫара пуҫăн ӳкерни пулмалла), г) хăҫан ҫуралнине ĕнентерекен свидетельство, д) сывлăха пĕлтерекен справка, е) хăйпе пĕрле паспорт пулмалла.

1-мĕш курса 1940—41-мĕш тата 1941—1942-мĕш вĕренӳ ҫулĕсенче туллимар вăтам шкултан „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе тухнисене тата ҫичĕ ҫул вĕреннĕ отечественнăй вăрҫă инвалидĕсене испытанисĕрех илеҫҫĕ. Ыттисене вырăс чĕлхипе, математикăпа, физикăпа тата СССР Конституцийĕпе испытанисем тыттараҫҫĕ. II-мĕш курса вăтам шкулăн 8—9-мĕш класĕсенчен „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеҫҫĕ. Вĕсен вара 1-мĕш курсра вĕреннĕ специальнăй дисциплинăсем тăрăх 1-мĕш семестр хушшинче испытани тытмалла пулать.

Туллимар вăтам шкултан отлично вĕренсе тухнисене тата отечественнăй вăрҫă инвалидĕсене стипенди параҫҫĕ. Техникума йышăннисем валли столовăй тата общежити пулать. Вĕреннишĕн икĕ срокра ҫулталăкне 150 тенкĕ тӳлемелле. Пенсионерсен ачисене, пенсионерсене, военнослужащисен ачисене, ҫавăн пекех тата отечественнăй вăрҫă инвалидĕсене вĕреннĕшĕн тӳлеттермеҫҫĕ. Испытанисем апрелĕн 11-мĕшĕнче пуҫланаҫҫĕ. Заявлени панисен уйрăм ҫырса пĕлтерессине кĕтмесĕрех ҫав вăхăт тĕлне килмелле. Занятисем апрелĕн 15-мĕшĕнче пуҫланаҫҫĕ. Заявленисене ҫак адреспа ямалла: Шупашкар, Калинин урамĕ, 3-мĕш номерлĕ шкул ҫурчĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуҫалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1014 Типографи № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.